"Кӗнекепе – ҫӗнӗ ҫула" фестиваль

# Кӗнеке вӑл – чун апачӗ

Эпӗ ҫамрӑк-ха, вун ҫичӗ ҫулта кӑна. Апла пулин те, эп астӑвасса, чылай ачасемшӗн кӗнеке пирвайхи тетте те, пурнӑҫпа паллаштаракан пӗлӳ ҫӑл куҫӗ те шутланатчӗ. Унти ӳкерчӗксемпе киленеттӗмӗр, аслисем вуланине итлеттӗмӗр. Халӗ ӗнтӗ пушӑ вӑхӑтӑн пысӑк пайне телевизор е компьютер умӗнче ирттеретпӗр. Питӗ ансат-ҫке: кнопка пус та ҫӗнӗ хыпарсем, ҫӗнӗ ятсемпе пулӑмсем, киносемпе концертсем хӑйсемех пирӗн пата килеҫҫӗ. Вуртсах курма пулать.

Анчах та ҫӑмӑлпа килнӗ япала тухса каясса та ҫӑмӑллӑн тухса каять иккен. Тӗпчевҫӗсем палӑртнӑ тӑрӑх, радио тата телекурав урлӑ илнӗ пӗлӳ ҫынсен асӗнче тарӑнах кӗрсе вырнаҫаймасть, часах манӑҫать. Ку енӗпе кӗнеке вӑйлӑрах. Ун валли ятарласа электроэнерги е батарейка та кирлӗ мар. Вӑл пирӗнтен нимӗн те ыйтмасть. Парасса вара питех те нумай парать. Мӗн те пулин ҫӗннине, усӑллине вӗрентмен кӗнеке ҫук. Унӑн пурин валли те хурав пур. Ҫавӑнпа та кӗнеке паян та вӗренӳре, ҫынсен тавракурӑмне анлӑлатас ӗҫре чи шанчӑклӑ пӗлӳ ҫӑл куҫӗ пулса тӑрать.

Килти е шкулти пурнӑҫ ҫав тери интереслӗ пулсан та, кӗнеке вуламасан чылай чухӑнланать. Тен, эпир вулакан малтанхи кӗнекесемех пирӗн малашнехи пурнӑҫ шӑпине татса параҫҫӗ, професси суйласа илме пулӑшаҫҫӗ, чуна пуянлатаҫҫӗ.

Ҫакна ҫирӗп ӑнланса, тӗпе хурса ӗҫлеҫҫӗ Москакассинчи вӑтам шкулти тата ялти библиотекӑсем. Г.А. Тимофеевапа Р.И. Сибякова библиотекарьсем шкулти вӗрентӳпе воспитани ӗҫне хастаррӑн хутшӑнаҫҫӗ, шкул ачисене кӗнекесене юратма хӑнӑхтарас тӗлӗшпе икӗ библиотека вӑйне, пуянлӑхне пӗрлештерсе ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсем шкул ертӳҫисемпе, вӗрентекенсемпе, воспитательсемпе тачӑ ҫыхӑну тытса кашни ҫулах анлӑ план хатӗрлеҫҫӗ, ӑна ҫирӗп пӑхӑнаҫҫӗ. Библиотекӑсене ҫӳрекенсене питӗ тараватt, мероприятисене питӗ тӗплӗн, пурне те шута илсе хатӗрлеҫҫӗ. Ҫавӑнпа та вӗсем йӗркелесе ертсе пыракан ӗҫсем шухӑш тарӑнлӑхӗпе кӑсӑклантараҫҫӗ.

Раштав уйӑхӗн 19-мӗш кунӗнче "Кӗнекепе – ҫӗнӗ ҫула" – темӑпа ирттернӗ фестиваль те ҫакна тепӗр хут ҫирӗплетрӗ, чӑн-чӑн кӗнеке уявӗ пулчӗ. Хутшӑнма кӑмӑл тунӑ ачасемпе ашшӗ-амӑшӗсем хӑйсен пултарулӑхне тӗрлӗ енчен кӑтартма пултарчӗҫ. "Манӑн юратнӑ кӗнеке" ятпа ирттернӗ ӳнерҫӗсен конкурсӗнче чи пултаруллисем 3-мӗш класри А. Алексеева, Н. Федоров, Н. Овчинникова, А. Ижелеева, Е. Овчинникова, 4-мӗш класра вӗренекен Л. Ершова, Е. Федорова пулчӗҫ, кӗнекесене чунтан юратнипе палӑрчӗҫ.

Кӗнекесем ҫинчен калакан ваттисен сӑмахӗсемпе каларӑшсене нумайрах пӗлес енӗпе К. Волкова, Л. Ершова, А. Ижелеева, К. Вастрюкова вӗренекенсене ҫитекенни пулмарӗ. Тӑватӑмӗш класри З. Раймова, Е.Федорова, Н. Ильина хӑйсене килӗшекен сӑвӑсене илемлӗ вуланипе тыткӑнларӗҫ.

Асӑннӑ кӗнеке фестивалӗ пӗлӳ патне туртӑнма пулӑшакан вӑй, хальхипе малашлӑхшӑн шухӑшлаттаракан яваплӑх туйӑмӗ ҫуратрӗ, кӗнеке пирӗн пурнӑҫра мӗн тери пысӑк вырӑн йышӑннине ҫинчен шухӑша ячӗ.

Паян фестивале хутшӑннисем малашне, тен, наука, техника, политика ҫыннисем пулӗҫ. Ҫапах та литературӑпа интересленни, сӑвӑсене асра тытни никамшӑн та сиенлӗ пулмӗ, пысӑк пулӑшу кӳрӗ. Кӗнекене кам та пулин чӗнсе каланипе е пӗр-пӗр вӑхӑтлӑх юхӑма хутшӑнма кӑна вулар мар. Каникул ан пултӑр уншӑн. Куллен хи чун апачӗ пултӑр вӑл пирӗншӗн.

**Е. ЗАХАРОВА,**
**11-мӗш класра вӗренекен.**

Ҫӗнӗ ҫул

# Тавах сире, уява ирттерме пулӑшакансене!

Ҫӗнӗ ҫул пуриншӗн те чи кӗтнӗ самант. Уйрӑмах вӑл ачасен чи савӑнӑҫлӑ уявӗ. Ҫак тапхӑр тутлӑ кучченеҫпе, парнепе, хаваслӑ юрӑташӑпа пуян.

Раштавӑн 26-мӗшӗнче район администрацийӗн ҫуртӗнче ашшӗ-амӑшӗсӗр, тӑлӑха юлнӑ ачасен хаваслӑ елки пулчӗ. Ҫакӑн йышшисем районта 87-ӗн. Вӗсенчен 83-шӗ опекӑпа попечительствӑра, 1 ачана усрава илнӗ, 3-шӗ реабилитаци палатинче хӳтлӗх тупнӑ.

Уяв самантне илемлетме Хӗл Мучипе Юрпике тата вырӑс юмахӗсенчи тӗрлӗ геройсем килсе ҫитрӗҫ. Хаваслӑ ача-пӑча юрларӗ, ташларӗ, вӑйӑ вылярӗ. Пурте пылак кучченеҫсемпе парнесене тивӗҫрӗҫ.

Ешел елка тавра чылайӑн пухӑнчӗҫ. Тӗрлӗ костюмсем тӑхӑнса килнӗскерсем, уява самай савӑклатрӗҫ. Ҫитес ҫул сысна ҫулӗ пулнине те систерчӗҫ ачасем. Эпӗ Юрпике тумӗ тӑхӑннӑ хӗр ачан аслашшӗпе сӑмахларӑм. "Тавах ҫакӑн пек елка йӗркелекенсене. Пире те чӗнчӗҫ, уйӑрса хӑвармарӗҫ. Тимлӗх уйӑрсан пире те шута хунӑ пек туйӑнать", – терӗ вӑл.

Уява пухӑннисене район администрацийӗн пуҫлӑхӗ Ю.А. Иванов саламларӗ. Ачасене усрава илнӗшӗн, ӑшӑ кӗтес, тимлӗх уйӑрнӑшӑн тав сӑмахӗ каласа ҫирӗп сывлӑх сунчӗ.

Уявӑн пӗрремӗш Хӗл Мучийӗсемпе Юрпикисем вара, ачасене савӑк кӑмӑл парнелекенсем, укҫан парса пулӑшакансем пулчӗҫ. Муркаш райповӗ (Б.В. Андреев) – 4000 тенкӗ, "ПФ "Моргаушская" ГУП (Н.Г. Ванеркин) – 2000 тенкӗ, "Кавказ" ООО (Т.Л. Иванова) – 2000 тенкӗ, "Пучах" ООО (К.Г. Сергеева) – 1000 тенкӗ, "Агро-Урожай" ЗАО (Е.П. Углев) – 700 тенкӗ, "Торговый дом "Визит" ООО (Л.В. Николаева) – 500 тенкӗ, "РГС-Поволжье" ООО (В.И. Вязов) – 500 тенкӗ, "Моргаушский рынок" МУП (Е.Н. Субботин) – 500 тенкӗ, Нотариус (П.И. Шлаев) – 500 тенкӗ, Мӑн Сӗнтӗр райпоӗ (Л.П. Майкова) – 500 тенкӗ, "Байт" ООО (Н.В. Еропанов) – 500 тенкӗ, ИП А.В. Малышев – 500 тенкӗ, "Мӑн Сӗнтӗр райповӗн ҫӑкӑр комбиначӗ" ООО (Л.Г. Ильгечкин) – 808 тенкӗлӗх пулӑшрӗҫ.

– Тавах вӗсене пурне те ачасем валли елка йӗркелеме пулӑшнӑшӑн, ҫын хуйхисуйхине ӑнланма пултарнишӗн. Енчен те вӗсем тимлӗх уйӑрман пулсан, ҫак ачасем валли хаваслӑ елка та пулмӗччӗ. Хӗл Мучин хутаҫҫи те пушӑ пулнӑ пулӗччӗ, ҫак илемлӗ зал та паян савӑк кулӑ илтмӗччӗ. Паллах, ачасем айӑплӑ мар вӗсен шӑпи ҫапла пулса тухнишӗн. Ҫӗнӗ ҫул уявне вара пурин те пылак ҫимӗҫпе, пӗчӗк ҫеҫ парнепе, хаваслӑ кулӑпа кӗтсе илес килет, – терӗ районти вӗрентӳ, ҫамрӑксен политики тата физкультурӑпа спорт пайӗн ачалӑха сыхлас енӗпе ӗҫлекен тӗп специалисчӗ И.С. Кабуркина.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

Халӑх йӑли-йӗрки

# Сурхури

Мӗн ӗлӗкренех чӑваш халӑхӗ ҫут ҫанталӑкри пулӑмсем ҫӳлти Турӑ хӑвачӗпе килеҫҫӗ тенӗ. Ҫавна май халӑх хушшинче савӑнӑҫлӑ уявсем ирттернӗ. Хӗл сивви ҫуррине ҫитнӗ ятпа Ҫӗнӗ ҫул уявӗ хыҫҫӑн кӑрлач уйӑхӗн 7-мӗшӗнчен пуҫласа Кӑшарни уявне туса ирттернӗ. Эрне малтан ҫамрӑксем хӑйсен ушкӑнӗпе, ватӑраххисем ватӑраххисемпе уява хатӗрленнӗ, уяв ҫуртне тасатнӑ, виҫ-тӑват кунлӑх вутӑ-шанкӑ, апат-ҫимӗҫ илсе пынӑ. Киремет умне кайса парнесем ҫакса хӑварнӑ, лайӑх пурнӑҫ ыйтнӑ. Кӑшарни уявӗ ыран тенӗ каҫ вӗсем юмӑҫ пӑхнӑ: ҫӑматӑсене хапха урлӑ ывӑтнӑ. Ҫӑматӑ пуҫӗ ӑҫталла – мӑшӑрӗ ҫав еннелле пулать тенӗ, ял ҫыннисен чӳречисенчен шаккаса мӑшӑрӗ мӗн ятлӑ пулнине ыйтса ҫӳренӗ. Картишӗнчен чӑхсене тытса кӗрсе пӳлӗме тулӑ, шыв, куҫкӗски, кӗл хурса панӑ. Кӑмӑн чӑххи тулӑ сӑхнӑ, ку вырӑха тенӗ, кӗл сӑхсан – ырра мар, шыв ӗҫсен – ӗҫкӗҫ пулать, куҫкӗски ҫине сӑхсан – шукӑль тумланма, якалса ҫӳреме юратакан пулать тенӗ. Тепӗр кун ирех кӑшарни уявӗн ӗҫки-ҫикине пуҫланӑ: ташланӑ, юрланӑ, ытти ушкӑна та кайса ҫӳренӗ. Виҫ-тӑват кун ҫапла иртнӗ.

Иисус ячӗпе тӗне кӗртесси Иисус ҫуралнинчен шутласа 1800 ҫулта чӑвашсем патне ҫитнӗ. Халӑх тӗне кӗресшӗн пулман, Иисуса мӗн ӗненмелли пур, тенӗ, ӑна, вылькх картинче ҫуратнӑскере, вӑл сурӑх ури ҫеҫ вӗт, тенӗ. Патша влаҫӗ чӑвашсене вӑйпах хӑйсен йӑли-йӗркине пӑрахтарса тӗне кӗртнӗ. Киремет вырӑнӗсене арктанӑ, ҫынсен ячӗсене улӑштарса вырӑсла ятсем панӑ. Тӗне кӗрес теменнисем вӑрмансенче ушкӑн-ушкӑнпа тарса пурӑннӑ. Иисус Христос тӗнне кӗнӗ хыҫҫӑн чӑвашсем тахҫан ӗмӗрхи Кӑшарни уявне Иисус ҫуралнӑ ятпа "Сурӑх ури" уявӗ теме пуҫланӑ.

Сурхури кун, кӑрлачӑн 7-мӗшӗнче, мӑйӑр ҫинӗ, пӑрҫа кукӑлӗ, икерчӗ пӗҫернӗ, сӑра вӗретнӗ. Пӗр-пӗрин патне хӑнана ҫӳренӗ.

Кӑрлачӑн 13-18-мӗш кунӗсенче ҫветке чупнӑ. Кил хуҫисем сӑра-эрехпе, янтӑланӑ мӑйӑрпа ҫамрӑксене сӑйланӑ. Нумайӑшӗ пӑрҫа, пан улми, кукӑль, та куклисемпе хӑналанӑ. Вӗтӗшакӑр ачасем пухӑнса каччӑсем, хӗрсем юрланине, ташланине курса ҫӳренӗ.

Ах, кинеми, кинеми,
Ҫитрӗ, акӑ, Сурхури.
Пире кукӑль памасан
Сурӑх ури хуҫӑлтӑр!
Пире кукӑль парсассӑн
Сурӑх ури сыпӑнтӑр...

Ҫапла вара Сурхури уявӗ пӗр эрнене пынӑ. Ваттисем пускилсемпе пухӑнса Сурхури уявланӑ.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

## Тав тӑватпӑр

Юратнӑ та хаклӑ аттене, асаттене, мӑшӑра – Муркаш ялӗнче пурӑннӑ Павел Семенович Семенова юлашки ҫула ӑсатма пулӑшнӑшӑн тата ҫак пысӑк хуйхӑна пирӗнпе пӗрле пайланӑшӑн тӑвансене, тус-юлташсене, пӗлӗшсене, кӳршӗсене, Е. Андреев ячӗпе хисепленекен ушкӑна чӗререн тав тӑватпӑр.

**Мӑшӑрӗ, хӗрӗсен тата ывӑлӗсен ҫемйисем.**


## Пӗлтерӳсем. Объявления

**12 января в РДК Ульяновская обувная фабрика проводит расширенную продажу обуви из натуральной кожи.**

**ООО «Моргаушрайбыт» срочно требуются: электрик, швеи и секретарь-референт.**
**Обращаться по адресу: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, дом 4, 2 этаж, «Дом бытовых услуг» или по телефонам: 2-15-44, 2-18-40.**

**Халӑхран лайӑх хакпа ӗне, вӑкӑр, тына ашпа тата чӗрӗ виҫепе пуҫтаратпӑр.**
**Тел.: 60-7-10, 8-927-848-17-06. 3-4.**

**ИП «Иванов» предлагает населению и предприятиям-организациям оконные и дверные блоки, балконные рамы по индивидуальным заказам по договорной цене. Изготовляем деревянные евроокна с двухкамерным стеклопакетом. Цвет по желанию заказчика. Производим резку стекла по вашим размерам. Предоставляются новогодние и рождественские скидки 10 процентов до 31 января 2007 года.**
**Тел.: 8-905-346-81-95, 8-906-130-92-99. 6-10.**

**Август вӗҫӗнче Муркашра велосипед ҫухатнӑ ачана 2-22-63 телефонпа шӑнкӑравлама ыйтатпӑр.**

**13 января с 9 до 11 в РДК**
**СЛУХОВЫЕ АППАРАТЫ**
**1500; 1800; 2950; 3150; 6000 руб.**
**и УЛЬТРАЗВУКОВЫЕ**
**СТИРАЛЬНЫЕ МАШИНКИ по ЦЕНАМ ЗАВОДА**
**1200; 1495; 2150; 2500; 3300 руб.**
**25% СКИДКА - пенсионерам, ветаранам, инвалидам!**
Официальный представитель завода
(3412) 455-855, 8-922-682-95-00
www.bionikaplus.ru
Товар сертифицирован


Моргаушский РУЭС Кугеського МУЭС филиала в ЧР ОАО «Волгателеком» глубоко скорбит старшему электромеханику связи Любимовой А.П. в связи с кончиной отца

**СЕМЕНОВА**
**Павела Семеновича.**

Ентешӗмӗре халалласа

## Викторинӑна активлӑ хутшӑнчӗҫ

Муркаш район администрацийӗн социаллӑ аталану пайӗ тата Муркашри тӗп библиотека пӗрремӗш ҫыравҫӑ, этнограф, фольклорист, пирӗн ентеш С. М. Михайлов-Янтуш ҫуралнӑранпа 185 ҫул ҫитнине халалласа «Вӑл пӗрремӗш пулнӑ» викторина йӗркелерӗҫ. Викторина ыйтӑвӗсем район хаҫачӗн раштав уйӑхӗн 13-мӗшӗнче тухнӑ номерӗнче пичетленчӗҫ.

Викторина иртессине пӗлтересенех Муркаш библиотекине шкул ачисем йышлӑн килме пуҫларӗҫ. Ачасем Спиридон Михайловӑн пурнӑҫӗпе, пултарулӑхӗпе интересленчӗҫ, унӑн хайлавӗсемпе ҫывӑхрах паллашрӗҫ.

Викторинӑна ачасем питӗ активлӑ хутшӑнчӗҫ. Уйрӑмах Юнкӑри С.М. Михайлов ячӗпе хисепленекен вӑтам шкулта вӗренекенсене палӑртас килет. Вӗсем хӑйсен ентешӗпе мӑнаҫланни, ун ҫинчен нумай пӗлни курӑнчӗ. Пур ыйтӑва та туллин хуравланӑ ачасем С. Янтушӑн хайлавӗсене вуласан ҫуралнӑ шухӑшсене ӳкерчӗксенче палӑртнӑ.

Викторинӑра районти ытти шкулсенче вӗренекенсем те пултаруллӑ пулчӗҫ. Хӑйсен ӗҫӗсене ачасем вӑхӑтра ҫитерме тӑрӑшрӗҫ, Муркашран аякра вырнаҫнӑ шкулсенче вӗренекенсем хуравсене ҫырупа ярса пама хапӑл турӗҫ.

Конкурса хутшӑнакансем хастар пулнӑран чи пултаруллине, чи маттуррине палӑртма ҫӑмӑл пулмарӗ. Викторинӑна хутшӑнакансен ӗҫӗсене пӑхса тухса ҫакӑн пек пӗтӗмлетӳсем турӑмӑр: чи пултарулли тесе Юнкӑри вӑтам шкулта 5 класра вӗренекен Мария Сытина тесе йышӑнтӑмӑр, иккӗмӗш вырӑна Мӑн Сӗнтӗрти пӗтӗмӗшле пӗлӳ паракан вӑтам шкулти 11 класра вӗренекен Любовь Алатова тивӗҫ пулчӗ, виҫҫӗмӗш вырӑна Тойкилтӗри пӗтӗмӗшле пӗлӳ паракан вӑтам шкулта 9 класра вӗренекен Анастасия Евстафьева тата Тивӗш шкулӗнче 11 класра вӗренекен Ангелина Кириллова пайларӗҫ.

Маттур, ачасем! Сирӗн конкурссене хутшӑнас кӑмӑлсем ан иксӗлччӗр, вӗренӳре ҫитӗнӳсем тума ӑнӑҫусем сунатпӑр сире!

**Хамӑр инф.**

Вулакан пултарулӑхӗ

### Саламлатӑп Ҫӗн ҫулпа

Ҫӗн ҫултан кунсеренех,
Раштав уйӑхне кӗрсен,
Тӑрса юлтӑр япӑххи,
Пултӑр пӗтӗмпех ырри.

Эпӗ пурне те сӗнеп
Такӑр, тикӗс, тӳр ҫулсем.
Ырлӑх-сывлӑхлӑ пулма
Тур пулӑштӑр пурсӑра.

Ирпе ирех уй-хирте
Кӗрлетӗр мотор сасси,
Вӑйлӑ тыр-пул пуҫтарар,
Пурнӑҫ шайне хӑпартар.

Ӗмӗтленнӗ ӗмӗтсем
Пурнӑҫланччӑр вӗҫӗмех,
Ырри пултӑр ытларах,
Тулӑх пурнӑҫпа пурнар.

Саламлатӑп Ҫӗн ҫулпа,
Ыр сунатӑп пурсӑра.
Маттур пулӑр ӗҫпеле,
Юратсамӑр пӗр-пӗрне.

**В. ПАВЛОВ,**
**пенсионер.**

Турай ялӗ.

### Эс ӑнланӑн-ши?

Шурӑ хурӑнӑм ҫумне
Эпӗ таянам-и?
Хамӑн шухӑшӑмсене
Каласа парам-и?
Итлесемччӗ мана,
Шурӑ хурӑнӑм,
Ӑнлансамччӗ мана,
Шурӑ йӑмӑкӑм.
Сана кӑна савнине,
Сана кӑна кӗтнине,
Саншӑн кӑна ҫуннине,
Саншӑн тунсӑхланине,
Кама эп калам-ши:
Юлташӑма – вӑл ӑнланӗ-ши,
Аннене – вӑл сисейӗ-ши,
Аттене – вӑл тавҫӑрайӗ-ши,
Ҫӳлти Турра – вӑл мӗнех калӗ-ши,
Сана – эс ӗненӗн-ши?
Эс ӑнланӑн-ши
Саншӑн кӑна тунсӑхланине?
Эс тавҫӑрайӑн-ши,
Саншӑн кӑна ҫуннине?
Эс ӗненӗн-ши
Сана кӑна кӗтнине?
Эс сисейӗн-ши
Эпӗ сана савнине?

**А. ИВАНОВА.**


ГУП ЧР "Моргаушский издательский дом"
Моргаушская районная газета
"ҪӖНТЕРӰ ЯЛАВӖ"
УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики "Моргаушский издательский дом".
Директор-главный редактор
А.И. ТИХОНОВ.

АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни, социальной жизни - 2-12-82, сельского хозяйства - 2-11-38.
E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу. Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Печать офсетная, объем 1,0 п. листа. Тираж 3472.
Материалы на правах рекламы публикуются под знаком Р или рубрикой «Аталану ҫулӗпе».
Время подписания в печать в 17 час. 20 мин., подписано - в 17 час. 10.01.2007 г.
Заказ
Дежурный по номеру ШАПОШНИКОВ В.Л.
ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.

Номер набран и сверстан в ГУП "Моргаушский издательский дом", отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.